# ХĂМЛА ÇЫРЛИ

Сăвви *П. Хузангайăн*






Тахçанах çынсем пуплеççĕ:
Тĕнчере пулать тĕрли.
Эп хăмла марне пĕлеççĕ,—
Ятăм ман—хăмла çырли.

Хăмла типĕ, эп сĕткенлĕ,
Хăмла йÿçĕ, эп пылак,
Хăмла сарă, эпĕ хĕрлĕ,
Хăмла çăмăл, эп сулмак.

Хăмла ÿсĕр, эпĕ урă,
Хăмла çÿлĕ, эп лутра.
Сахал мар тата та урăх
Уйрăм пирĕн хушăра.

Ахаль мар çынсем пуплеççĕ:
Тĕнчере пулать тĕрли.
Эп хăмла марне пĕлеççĕ,—
Ятăм ман—хăмла çырли.